Рег. № 125. VI-95

М. КИБЕК



# Тăван çĕршывшăн

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1941

М. КИБӖК

26 июня 1941 г.
№ 125

# ТӐВАН ҪӖРШЫВШӐН

КАЛАВСЕМПЕ ОЧЕРКСЕМ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

# КАПИТАН КОЧЕТКОВ

Белорусси Çар округĕн иртнĕ çулхи маневрĕнче пирĕн уйрăм батальон Сыроежки станци çывăхĕнчи сăртсем çинче сыхланулă позици йышăнчĕ. Штаб вырнаçнă вĕтлĕх вăрманлă сăрт çинчен станцă леш енчи раща урлă Пешки ятлă ялăн темиçе çул сăрламасăр ларнипе хĕрелсе кайнă чиркĕвĕ курăнать. Унта „кăваккисен“ сăнав пункчĕ вырнаçнине пĕлетпĕр эпир. Çавăнпа та вăрмантан тĕттĕм пулсан çеç тухатпăр.

Станцăра „тăшманăн“ бронепоездпа çăмăл танксен взвочĕ тăрать. Лазутчиксем пĕлтернĕ тăрăх, „кăваккисем“ ыран Сыроежки районĕнче „хĕрлисен“ фронтне татма хатĕрленеççĕ. Хĕвел çĕр çумне çывхарнă чух станцăна икĕ эшелон килсе аннине сăнав пунктĕнчен биноклыпе пăхса курни лазутчиксем пĕлтерни тĕрĕс иккенне систерчĕ. Вара пирĕн батальон командирĕ çак çывăхра çуралнă красноармееца колхозник пек тумлантарса Пешки ялне ячĕ. Икĕ сехетрен вăл таврăнса „тăшман“ мĕн тума хатĕрленни çинчен пухнă сведенисене капитана каласа пачĕ. Ир çинче станцăна „кăваккисен“ мото-мех

полкĕ килмелле. 10 сехетчен вĕсен çăмăл артиллерийĕ пирĕн пулеметсем лартнă вырăнсене аркатса тăкмалла. Вуникĕ сехетре „хĕрлисене" икĕ флангран тапăнаççĕ. „Тăшманăн" штурмăллă авиоэскадрильи пирĕн хыçра тăракан резервăри полкпа ытти пулăшу çар пайĕсене малти позици патне çывхарма чармалла.

„Кăваккисен" тапăну планне пĕлсенех пирĕн уйрăм батальон командирĕ капитан Кочетков, штаб начальникĕпе канашланă хыççăн, фронтăн Сыроежки районĕн начальникĕ патне хирĕçле тапăну планĕ туса ячĕ. Район начальникĕ плана çирĕплетсе шăпах вуникĕ сехетре атакăна пуçлама приказ кăларчĕ, пирĕн батальона пулăшма йывăр артиллери дивизионĕпе вăтам танксен взводне яни çинчен пĕлтерчĕ. Пулăшу вунпĕр сехетре çитсе, хатĕрлесе хунă вырăна йышăнмалла. Вара батальон атакăна тухать.

Тĕттĕм пулсанах капитан Кочетков пире, Чирков юлташпа иксĕмĕре, разведвзводран чĕнсе илсе, юланутпа „тăшман" тылне „чĕлхе" тупма ячĕ. Эпир типĕ çырмасем тăрăх йăпшăнкаласа çурă сехетрен Сыроежки станцин леш енне тухрăмăр. Лашасем такансемпе чулсене перĕнсе сас ан туччăр тесе, вĕсен урисене çемçе пушмаксем тăхăнтарни пире пулăшрĕ. Хуллен кашласа ларакан раща хĕррине çитсенех малта пыракан Чирков лашине чарчĕ.

— Афанасьев юлташ,—терĕ вăл хуллен,—эпĕ „кăваккисен" çурран çыхăнуçине куратăп.

— Ăçта?—ыйтрăм эпĕ шăппăн.

— Авă, çав васана анчĕ. Эсĕ çак сукмакпа кайса унăн çулне пӳл, эпĕ васан пуçне кайса унăн каялла чакмалли çулне картлăп. Капитан панă приказа асра тыт: „тăшмана“ „чĕррĕн“ илме тăрăш.

— Юрать,—терĕм эпĕ.

Эпир уйрăлтăмăр. Чирков йывăç тĕмисем хушшипе лашине çавăтса васан еннелле утрĕ, эпĕ сукмакпа юрттартăм. Ăслă лаша эпир „тăшман“ çĕрĕ çинчине сисет пулас, вăл юлташĕнчен уйрăлнă пулин те, ни кĕçенмест, ни тулхăрса сасă кăлармасть.

Васан патне çитсенех эпĕ лашана ракит йывăçĕ тĕми хыçне кăкарса, сукмак кукрăлнă тĕле пырса, вată чăрăш çумне лăпчăнтăм. Кĕçех тĕттĕм сывлăшра Моцарт çырнă „Туркăсен маршне“ шăхăрса пыракан çын утни илтĕнчĕ. Эпĕ çурăм хыçĕнчи винтовкăна алла тытрăм. Çав самантрах „тăшман“ çыхăнуçи сукмак кукăрĕнчен тухса манпа танлашрĕ. Эпĕ засадăран сиксе тухрăм.

— Тăр! Аллусене çӳлелле çĕкле!—терĕм эпĕ, пăшал кĕпçине унăн кăкăрне перĕнтерсе. Вăл „хĕрлисен“ разведки станцă хыçне пыма хăяймасть тесе шутланă пулас:

— Юлташ,—тĕрĕ,—эсĕ çĕтсе кайрăн-и мĕн? Вĕт эпĕ „кăваккисен“ çыхăнуçи...

— Çав çыхăнуçă кирлĕ те мана. Урăх пĕр

сăмах та ан шарла. Халех „наганна“ вĕçертсе мана пар!—терĕм хыттăн.

Вăл пĕр самант ман çине пăхрĕ. Унтан унăн куçĕсем винтовка çинче чарăнчĕç. Вара, эп шўт туманнине курса, сылтăм аяккинче çакăнса тăракан револьверне вĕçертсе мана тыттарчĕ. Эпĕ шăпчăк юрланă пек сасă кăлартăм. Васан пуçĕнче „карăш“ картлатни илтĕнчĕ. Тепĕр самантран Чирков юрттарса çитсе тыткăна лекнĕ çыннăн аллисене хыçалалла çыхрĕ. Вара эпир ăна Чирков лаши урçи çине ўпне выртартăмăр.

— Юлташсем,—терĕ çыхăнуçă,—капла илсе кайсан эсир мана варсăр тăватăр. Йĕнер хыçне те пулин лартăр. Хĕрхенĕр, юлташсем.

— Ку саншăн пысăк урок пултăр: ўлĕмрен тыткăна ан лек. Кам сана „вăрçă“ хирĕнче çĕрхута шăхăрса çўреме хушнă?—ăс патăмăр ăна. Унтан лашасем çине утланса батальон штабĕ еннелле вĕçтертĕмĕр...

— Пысăк кайăк çаклатнă манăн чаплă сунарçăсем,—терĕ капитан, Чирковăн рапортне итлесе пĕтерсен.—Парăр-ха мана хăвăрăн пакетăра!—çавăрăнчĕ вăл çыхăнуçă енне.—Дежурнăй, тыткăна лекнĕ çынна уйрăм палаткăна илсе кай! Ординарец, халех ман лашана илсе кил!

Ординарец вите еннелле кайăк пек вĕçтерчĕ.

— Сире,—терĕ капитан пирĕн алăсене чăмăртаса,—служба ячĕпе тавтăватăп.

Эпир савăннипе хумханнă сасăпа: „Совет

союзěшěн служить тăватпăр!“ тесе харăс ответлерěмěр.

Вăл палаткăна кěрсе кайрě. Эпир малалла мěн тума хушассине кěтсе лаша урисенчен çемçе пушмаксене хыврăмăр. Çирěм минутран капитан пирěн пата тухрě.

— „Кăваккисем“ пирěн плана пěлмеççě,—терě вăл.

Çак вăхăтра ординарец ташласа тăракан тимěр-кăвак лашана çавăтса килчě. Капитан чěлпěре алла илсе, лашан лăпчăтнă хăлхисем хушшине пўрнисемпе хыçрě те, çамрăк каччă пек çăмăллăн утланса ларчě.

— Эпě иккěмěш ротăна каятăп. Эсир манпа пыратăр. Тепěр çур сехетрен атака тапранать. Эпě утлă заставăна Ятсăр текен тěме патне ятăм. Çак самантран эсир манăн çыхăнуçăсем пулатăр.

Капитан вăрçă хирěсене курма хăнăхнă куçěсемпе уйăх çути айěнче хуралса выртакан траншейăсем çине пăхрě те, лашине пирěн хушша тăратса, хуллен уттарма хушрě.

— Капитан юлташ,—терě Чирков, пěр самант шăппăн пынă хыççăн,—эсир граждăн вăрçи вăхăтěнче икě орден илнě. Мěнле çапăçусем хыççăн панă сире вěсене?

— Тěплěн калас пулсан, вăхăт нумай кирлě. Эпě сире иккěмěш ордена парас умěн пулса иртнě çапăçу çинчен çеç каласа парăп.

— 1920 çул. Манăн рота халě эпир пыракан

вырăнтан утмăл çухрăмра батальонран татăлса юлчĕ. Ротăра мансăр пуçне пĕр вырăс та çукчĕ. Тĕп вăйĕ—китаецсемпе мадъярсемччĕ. Анчах унта тутарсем, чăвашсем, башкирсем те сахал марччĕ. Пĕтĕмĕшпе çул çинче хутшăннă партизан отрячĕпе пĕрле пилĕкçĕр çынна çитнĕччĕ рота. Çак йышпа Свислоч ятлă шыв урлă каçаймасăр пилĕк кун пĕр вăрманта тăтăмăр. Çав пилĕк кун хушшинче Сыроежки станцинче тăракан хамăр батальон командирĕ, шыв урлă хăвăртрах каçма хушса, виçĕ хутчен приказ ячĕ. Анчах ею кайнă çырма пире тытса тăрать. Юлашки приказĕнче батальон командирĕ Сыроежкине çитме вуникĕ сехет срок пачĕ.

*„Паян каçхине 8 сехетре батальона хуса çитмесен санăн ротуна пăрахса хăвапатпăр. Пире шурă поляксем хĕсе çитереççĕ. Кочетков юлташ, çак приказа пурнăçламасан, чи малтан тĕлпулсанах сана хам алăпа персе пăрахатăп. Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери Революци! Тĕп пултăр ĕçхалăх интересĕсене буржуазие сутакан тăшман! Классен çапăçăвĕнче çиеле тухар! Приказа красноармеецсене вуласа памалла.*

*Алă пуснă:* ***Комбат***
***Комиссар.***

Тул çутăлсанах приказа пурне те вуласа патăм. Унтан юлашки çăкăра валеçсе пама хушрăм: кашни вунă çынна пĕрер кĕренке тиврĕ.

— Юлташсем!—терĕм эпĕ,—пирĕн пурнăç хамăр алăра. Паян каçчен Сыроежкине çитмесен, шурă поляксен тыткăнĕнче мăшкăл курса, асапланса вилĕпĕр. Пурте пĕр çын пек кар! тăрсан, вуникĕ сехет хушшинче утмăл çухрăм утăпăр. Вара вилĕмрен çăлăнма пултаратпăр. Юлташсем, комбат приказне пурнăçлама сăмах паратăр-и эсир?

— Комбат приказне пурнăçлатпăр! —темиçе чĕлхепе кăшкăрчĕç красноармеецсем.

Вара каçхине туса пĕтернĕ паромпа ротăна Свислоч урлă каçартăм та, похода тухрăмăр.

Эсир кулатăр,—терĕ капитан пирĕн çине пăхса.—Паллах, утмăл çухрăм утасси сирĕншĕн нимĕн те мар. Эсир кашни кунах шурă çăкăр, аш-какай, сахăр, çу, рис пăтти тăраниччен çиетĕр. Ман рота 1920 çулта Свислоч шывĕ хĕрринче тăнă чухне, пилĕк кун хушшинче кашни çын пуçне çуршар кĕренке тачка çăкăрпа çырма шывĕсĕр пуçне нимĕн те ăша яман. Сирĕн урасенче çирĕп, çемçе атăсем—манăн интернационаллă ротăра çирĕп çăпата та вунă мăшăртан ытла марччĕ, ыттисем урисене е çĕтĕк кĕпесемпе чăрканăччĕ, е çара уранах утатчĕç. Эсир халĕ похода тухсан, ура пӳрнине хăпартса кăларсанах сире врач, ирĕксĕр, тенĕ пек, васкавлă пулăшу автобусĕ çине лартать; поляксемпе çапăçнă вăхăтра эпир вилес пек чирлĕ выртакансене те е алвĕççĕн çĕклесе, е пулемет тачанки çине вырттарса илсе çӳрет-

тӗмӗр. Сирӗн халӗ условисем урӑх. Граждан вӑрçи вӑхӑтӗнче пӗр кунта утмӑл çухрӑм утасси çӑмӑл ӗçех марччӗ. Çапах эпир похода çӗнтерсе тухрӑмӑр. Çав хастарлӑх пулӑшнипе пулас, кашни сехетре пилӗкшер минутлӑх привал туса, ултӑ сехет хушшинче вӑтӑр пилӗк çухрӑм кайрӑмӑр. Анчах юлашки çирӗм пилӗк çухрӑма утасси темрен те хӗн пулчӗ. Винтовкӑпа кутамкка пуснипе пӗкӗрӗлнӗ красноармеецсен çара урисем пуснӑ вырӑна, вӗт чул çине, хӗпхӗрлӗ йӗр юлать. Пурте, ывӑннипе, урасем сурса ыратнипе, хуллен ахлатаççӗ. Анчах стройран пӗри те тухмаççӗ. Вӑйлӑраххисем çумӗнчи юлташӗсен пӑшалӗсене илсе çӗклесе пыраççӗ. Çапла, каçхине сакӑр сехет тӗлӗнче, Сыроежки çывӑхӗнчи, авӑ, çав ращана çитсе чарӑнтӑмӑр.— Капитан аллине çӗклесе Пешки ялӗ енче хуралса ларакан шултӑра йывӑççем çине кӑтартрӗ. Унтан сывлӑш çавӑрчӗ те, малалла калама пуçларӗ:

— Эпир малтанах тупӑ кӗмсӗртетнине илтсеттӗмӗр. Çавӑнпа мала утлӑ разведка янӑччӗ. Кӗçех разведка таврӑнчӗ. „Станцӑна поляксем çавӑрса илнӗ. Тӑшман унки пирӗн батальон тавра хӗсӗнсех пырать“, терӗ разведка начальникӗ.

— Поляксем нумайӑн-и?

— Пӗр полка яхӑн.

Эпӗ политрука красноармеецсене атакӑна кайма хатӗрлеме хушрӑм. Вӑл ротӑна пухса ми-

тинг уçрĕ. Хам лаша утланса рекогносцировкăна кайрăм.

Поляксем чăнах станцăна çавăрса илнĕ мĕн. Вĕсен тĕп вăйĕ сылтăм флангра. Унта станоклă пулемет ротипе утлă эскадрон тăраççĕ. Вĕсен артиллерийĕ Ятсăр тĕме хыçĕнчен станцăна çунтарать. Үнкă варринче хĕрлисем, патронсем сахалран пулас, пĕччен-иккĕн çеç перкелеççĕ. Лайăх сăнанă хыççăн станцăна икĕ батальон тапăннине пĕлтĕм эпĕ.

Суранлă, выçса хăраннă, кунĕпе утса ывăннă ротăпа аван хĕçпăшалланнă икĕ батальона хирĕç атакăна кайни усăсăрри каламасăрах паллă. Кунта нимĕнле харсăрлăх та пулăшма пултараймасть. Пуçпа çапса чул хўмене шăтараймăн. Вилĕмрен хăтăлма пĕр çул çеç юлчĕ пирĕн. Вăл çул—тăшмана улталасси. Эпĕ авалхи çарпуçлăхĕсем: Македонский, Ганнибалл, Марий, Спартак, Суворов çапăçусенче час-часах чееленсе çиеле тухнине аса илтĕм. Вара шурă поляксене улталама мел шырама пуçларăм.

Чи малтанхи шухăш—хамăр ротăна рота мар, тин çеç резервăран килнĕ вăйлă полк туса кăтартса, шуррисене хăратасси пулчĕ. Çак плана пурнăçлас ĕмĕтпе эпĕ хамăн вунпилĕк лаша çине çăмăл суранланнă красноармеецсене утлантарса поляксен сăнав пунктĕнчен курăнакан пĕчĕк уçланкăна ятăм. Вĕсем çав уçланкă урлă çĕр çумне çывхарнă хĕвел çуттипе шашкисене йăлтăртаттарса поляксен сылтăм флангĕ еннел-

ле пĕччен-пĕччен вĕçтерсе каçса, вăрман ăшĕпе каялла таврăнмалла. Унтан татах малтанхи пекех уçланкă урлă каçмалла. Çавна асăрхасан поляксем хĕрлисен утлă çарĕ хăйсен сылтăм флангне çавăрса илет тесе шутламалла. Ман шухăш тĕрĕс пулни çапăçу пĕтсен палăрчĕ, тыткăна лекнĕ офицерсем каланă тăрăх, вĕсем уçланкă урлă каçакан утлă красноармеецсен шутне çичçĕр çынран та иртгернĕ. Çавăнпа вĕсем станоклă пулеметлă иккĕмĕш ротине те сылтăм фланга куçарса, ман ротăна хăйсен сулахай флангне тапăнма çул уçнă. Çакна асăрхасан эпĕ, ротăна вăрман хĕрне сывхартса, мĕн пур вăйран татти-сыпписĕр „Ур-ра!“ кăшкăрма хушрăм. Эхо пулăшнипе пĕтĕм вăрман янтрама пуçларĕ. Пĕртен-пĕр виçĕ дюймăллă тупă юлашки снарячĕсене шуррисен сылтăм флангĕнчи пулемет ротисем çине тăкма пуçларĕ. Пилĕк минут вăрмана янтратнă хыççăн, китаецсен пĕрремĕш взвочĕ станцăна çавăрса илнĕ поляксен хыçне сиксе тухса атакăна кайрĕ. Ун хыççăн мадъярсен пĕрремĕшпе иккĕмĕш взвочĕсем шрапнелсемпе салатса янă поляксен сылтăм флангне тапăнма пуçларĕç. Вĕсем хыççăн икĕ пулемет тачанки хыçала çатракаллă йывăççем çыхса тусанлă çулпа ним палăрми хура тусан мăкăрлантарса чуптарчĕç. Юлашки вак халăхсен взвочĕпе çул çинче пĕрлешнĕ партизан отрячĕ вĕçĕхĕррисĕр пăшал персе, тата „ура“ кăшкăрса каçхи вăрмана янтратма чарăнмарĕ. Çапла ту-

нипе эп шуррисене, хěрлисен тěп вăйě вăрмантан тин çеç тухма хатěрленет, тесе шутлаттарасшăнччě.

Вăл çаплах пулчě те. Эпě бинокльпе сăнама пуçларăм. Хăйсен çине пур енчен те сасартăк тапăннине кура, поляксем пеме пăрахрěç те, сылтăм флангран татăлса, винтовкăсемпе шинелěсене пăрахса ним йěркесěр тарма пуçларěç. Куратăп, вěсем станцă анат пуçěнчи Шапа шурлăхě текен вырăнала ыткăнаççě. Ывăннине маннă китаецсен взвочě вěсене пěр хěрхенмесěр вěлерме тытăнчě.

Çак вăхăтра станцăра хупăнса ларакан пирěн батальон, хăйсене пулăшма шанчăклă вăй килнě, тесе, шуррисен сылтăм флангне хаяррăн тапăнчě. Ятсăр тěме хыçне вырнаçнă поляксен батареи çинче татти-сыпписěр шрапнель çурăлма тытăнсан, вăл шăпланчě. Вара поляксем, хирěç тăнинчен усă пулас çуккине сиссе, чакма пуçларěç. Мадъярсен икě взвочě поляксен пехотине артиллерипе пулемет ротисенчен пěтěмпех татса илсе, вăрмана, пирěн еннелле хупăрлама пуçларě. Вěсем пирěн пата çитсен эпě юлашки взводпа сиксе тухрăм. Ман хыççăн партизансем те юлмарěç. Хăйсене пур енчен те çавăрса илнине пěлсен, вěсем пăшалěсене пăрахса аллисене çěклерěç. Çапăçу сылтăм флангра çеç юлчě. Эп унта китаецсемпе мадъярсен иккěмěш взводне ятăм. Станцăран тухнă хěрлисен роти Ятсăр тěмене тытса илчě. Тепěр

çур сехетрен çапăçу пĕтрĕ. Шуррисен штабĕпе батареи утлă эскадрон хӳттипе Терцы ятлă пĕчĕк хулана тарса ӳкрĕç. Ыттисем е çапăçу хирĕнче суранланса, вилсе тăкăнчĕç, е Шапа шурлăхне путрĕç. Пилĕкçĕр çын тыткăна парăнчĕç. Поляксен обозĕнчи салтаксем, пĕтĕмпех белоруссемпе украинецсем пулнă пирки, пĕр çапăçмасăрах пирĕн енне куçрĕç. Хĕрлĕ Çара ирĕклĕн сырăнчĕç.

Капитан пĕр самантлăха шăпланчĕ. Унтан лаши çинче юсанса ларчĕ те малалла калама пуçларĕ:

— Да, тĕлĕнмелле ĕçсем пулаççĕ вăрçăра. Пирĕн план питĕ ăнăçлă пулчĕ. Çапăçу чарăниччен хамăр начальник те пĕлмен, вăл хăйсене пулăшаканĕ интернационаллă рота мар, çĕнĕрен килнĕ полк, тесе шухăшланă. Вăрçă хирĕ шăплансан тин чухласа илнĕ вăл эпир камсем иккенне. Пирĕн ротăри çынсем çĕтĕкçатăк тумланнине, тӳрленсе çитеймен суранĕсемпе утмăл çухрăм хушши утнине, ывăннипе ура çинче аран-аран тăракан пулнине пĕлчĕ те вăл, куççульне шăлса илсе, мана ыталаса чуптурĕ...

Тепĕр кунне кăнтăрти фронтран килнĕ Пĕрремĕш утлă çарăн виççĕмĕш полкĕ Сыроежкине пырса çитрĕ. Çав кунах каçпала эпир поляксенчен Терцы хулине тытса илтĕмĕр. Çапла тасатрăмар Сыроежки—Терцы районĕсене поляксен бандисенчен. Правительствăпа парти

çав çапăçу паттăрĕсене орденсем парса парне лерĕ. Вăл шутра эпĕ те пултăм.

— Батальон командирĕ халĕ пурăнать-и?— ыйтрĕ Чирков капитанран, тепĕр калав итлеме ĕмĕтленсе.

— Тин çеç асăннă çапăçусем пĕтсен ăна Врангель фронтне куçарчĕç. Кайран эпĕ унăн ятне Перекопа илнĕ чух çапăçса вилнĕ паттăрсен ячĕсемпе пĕрле куртăм, вăл паттăрсен списки хаçатсем çинче пичетленсе тухнăччĕ,— терĕ те вăл, татах шăпланчĕ.

Эпир иккĕмĕш рота вырнаçнă çĕре çитрĕмĕр. Унта капитана штаб начальникĕпе рота командирĕ кĕтсе тăраççĕ.

— Вăхăт çитет, капитан юлташ!—терĕ начштаб.

— Сигнал парăр,—приказ пачĕ комбат, сехет çине пăхса.

Каçхи тĕттĕме хĕрлĕ ракета çиçĕм пек çиççе çурчĕ. Çав самантрах Пешки ялĕ енче тупă кĕмсĕртетме тытăнчĕ, Сыроежки леш енчи тимĕр кĕпер патĕнче темиçе метр çӳллĕш çулăм йăлкăшса хăпарчĕ те вĕçĕ-хĕррисĕр хĕм сирпĕнме пуçларĕ.

— Тимĕр кĕпере „сирпĕтсе ячĕç“, „кăваккисен“ чакмалли çулĕ татăлчĕ,—терĕ капитан, бинокльпе пăхса.

Вăрмантан танксем сывлăша чĕтретсе тухрĕç те станцă еннелле вĕçтерчĕç. Вĕсем хыççăн— пĕрин хыççăн тепри—виçĕ рота атакăна кай-

рĕç. Хура пĕлĕтре кÿçакан мăшăр çăлтăрсем сиксе тухрĕç.

— Штурмăлă авиаци!—пăшăлтатрĕ Чирков.

Тĕттĕм çĕр мотор шавĕпе тупăсем кĕмсĕртетнĕ сасăпа тулчĕ.

„Çапăçу“ пуçланчĕ. Пирĕн уйрăм батальон станцăна кĕрсе „кăваккисен“ тин çеç ăшă ыйăхран вăраннă салтакĕсене плена çавăрса илчĕç. Икĕ сехет хушшинче эпир „кăваккисене“ çĕмĕрсе тăкрăмăр.

# ЛЕЙТЕНАНТ ЫВĂЛĔ

Вĕр-çĕнĕ тумтир тăхăннă лейтенант вагон чӳречи умне пырса тăчĕ. Ун куçĕ умĕнчен телеграф юписем, тин çеç çума чарăннă шалкăм çумăрпа йĕпеннĕ ват юмансем, чугун çул хĕррипе купаласа хунă шпалсемпе кивĕ рельсăсем вĕлтлетсе иртме пуçларĕç. Вăл пĕр самант ним шухăшламасăр пăхса пычĕ. Унтан, çул кукăрне çитсен, инçетре çуллĕ мăръеллĕ савăтсем курăнсан, хăй тăван çĕршыв патне çывхарнине сисрĕ. Вара вăл тăруках икĕ çул каялла пулса иртнĕ ĕçсене аса илчĕ...

Янкăр уяр кун. Кӳршĕ хĕрĕ Ленăпа вĕсем икĕ хутлă çуртран тухрĕç. Инçех каймалла мар вĕсен, хăйсен ялне çеç çитмелле. Ялĕ курăнсах ларать. Вĕсен иккĕшĕн те çулсерен çĕклесе çӳренипе çуркаланнă портфелĕсенче вăтам шкултан питĕ аван вĕренсе тухнине кăтартакан ĕнентерӳсем пур. Çав ĕнентерӳсене вĕсем паян кăна шкултан илсе тухнă. Темиçе хут та ĕнтĕ вуланă вĕсене, çавах та чунĕ чăтмарĕ вĕсен,

ула-чăла чечексемпе эрешленнĕ çеремлĕ вар тĕлне çитсен, симĕс курăк çине юнашар ларчĕç те вĕсем, çав ĕнентерӳсене тата тепĕр хут вуласа тухрĕç.

— Виктор, медицина институтне вĕренме илме ыйту ыран яратпăр-и?—терĕ Лена.

— Малашне ăçта вĕренесси пирки манăн шухăш улшăнчĕ. Врач пулас ĕмĕте пăрахрăм эпĕ. Халĕ артиллери училищине каяс тетĕп. Хамăр шкул директорĕ те çар училищине кайма канаш пачĕ.

Ленăн савăнăçлă сăн-пичĕ хуллен тĕксĕмленчĕ. Вăл юлташĕн куçĕнчен пĕр самант шухăшлăн пăхрĕ те, ун кăмăлне хуçас мар тесе, малтанхи пекех кулма тăрăшрĕ.

— Эпир яланах пĕрле вĕренме шухăшланăччĕ, мĕншĕн халĕ манран уйрăласшăн эсĕ?—хăюсăррăн ыйтрĕ хĕр.

— Пĕр эрне каярах ман ĕмĕт çаплаччĕ... Юлашки кунсенче ун пирки нумай шухăшларăм эпĕ. Ман сывлăх çирĕп, эпĕ шкулта чи лайăх физкультурниксенчен пĕри. Çавăн пек çамрăксен сыхлăх ĕçне тĕреклетесшĕн хастарлăн кĕрешмелле. Эпĕ хĕрлĕ командир пулма шухăшларăм.

Лена яланах Викторпа пĕрле вĕренме, ĕçлеме шухăшланă пулин те, юлташĕ хăй валли „ăшă вырăн" шыраса мар, çĕршыва, тăван халăха вăй çитнĕ таран усă пама ĕмĕтленнине шута илсе, унпа урлă сăмахсăрах килĕшрĕ.

Кӗркунне вӑл ӑна Киев хулинчи артиллери училищине вӗренме ӑсатрӗ. Çывӑхри разъезда çитиччен колхозри чи лайӑх лашапа ӑсатрӗ вӑл ӑна. Вӑл лашана тиха чухне Виктор хӑй пӑхатчӗ. Ялтӑркка хура пулнӑран ятне те унне „Çӗлен“ тесе хунӑччӗ. Вӗсем разъезда çитиччченех тепӗр икӗ султан тата тӗлпуласси çинчен, пӗрпӗрин патне çыру çырса тӑрасси çинчен калаçса пынӑччӗ. Лена ун чух та, юлташӗн савӑнӑçлӑ кӑмӑлне хуçас мар тесе, çул тӑршшӗпех шӳт тукаласа, çӑмӑллӑн калаçса пынӑччӗ. Çапах та, тусӗ вагон чӳречинчен юлашки хут алтутрипе сулсан, унӑн куçӗ тӗксӗмленсе килчӗ...

Лейтенант, чӳрече умӗнчен пӑрӑнса, чемоданӗсене çӗре илсе лартрӗ. Пӗр купере пыракан учительсемпе ик-виçӗ сӑмах хушса илчӗ. Вара татах Лена çинчен шухӑшлама пуçларӗ.

Киева çитсенех çыру янӑччӗ вӑл ун патне. Пилӗк уйӑх хушши умлӑ-хыçлӑн çырса тӑнӑччӗ. Çуркунне енне Лена темле хуйӑх пулассине систерме пуçларӗ. Виктор унӑн сисӗмлӗхӗнчен кулса çыру янӑччӗ. Вара Ленӑран вӑл урӑх пӗр çыру та илеймерӗ. Малтан пӑшӑрханчӗ унщӑн, анчах хулари самантсерен улшӑнакан пӳрнӑçпа çӗнӗрен паллашнӑ çынсем инçетри тус çинчен часах мантарчӗç.

Сарӑ хӗвел, кунсерен çӳле хӑпарса пырса, Украина тулӑх çӗршывне хӗл тыткӑнӗнчен хӑтарчӗ. Училище лагере кайма хатӗрлене пуçларӗ. Çак вӑхӑтра Виктор мучӗшсен хӗрӗнчен

çыру илчĕ. Унта Лена ывăл ача çуратни çинчен тата ăна Виктор çумне çыртарни çинчен пĕлтернĕ. Мучĕшĕсен хĕрĕ, Виктор вĕренме кайсанах, ялти учитель Петр Тарасов Ленăпа çўрени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çырăва яракан хĕр элек сарма юратнине пĕлнĕ пулин те, Виктор, çав сăмахсене ĕненсе, Лена ачин ашшĕ хăй мар пуль тесе шухăшларĕ.

„Кăçал кĕркунне, отпуска кайсан, ку ĕçе тĕрĕслеме пулĕ-ха", тесе, вăл хăйне ача ашшĕ тунăшăн хирĕçсе ялсоветне çыру тавраш ямарĕ. Анчах каникула янă вăхăтра, вар тифĕпе чирленĕ пирки, унăн киле таврăнмалла пулмарĕ. „Ĕçе училищăран тухсан татăп", тесе çеç лăплантарчĕ вăл хăйне хăй.

Халĕ çавăн пирки яла таврăнать.

Паровоз уççăн шăхăртрĕ. Чўречерен йывăç суртсем курăнчĕç. Курортниксемпе сывпуллашса, тин çеç чарăннă вагон ăшĕнчен чемоданĕсене çĕклесе тухрĕ лейтенант.

* * *

Колхозниксем çуйхашса, кулăшла халапсем каласа, айванрах юлташĕсенчен тăрăхласа кĕлтесем сыхаççĕ. Кĕреплепе тармакланса пыракан жнейка çинче вĕсен бригадирĕ Лена Порфирьевна ларса пырать. Вăл яланах пĕрле çўрекен çамрăк юлташĕсем патĕнчен иртнĕ чух ик-виçĕ сăмах кăшкăрса калать те, лешсем, хăйсен участокĕ пуçĕнче вĕлкĕшсе ларакан виçĕ бригада

хушшинче куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав çине кă-тартса, савăнăçлăн кулаççĕ.

Жнейка çул хĕррине çитнĕ чухне лашасене ял енчен чупса килнĕ аслă конюхăн кĕçĕн ывă-лĕ Шăнкăрчă чарчĕ.

— Лена, сана Бакланов халех правленине на-рядсене епле тултарнине кăтартакан сводка илсе пыма хушрĕ,—терĕ вăл.

Лена жнейкăпа ĕçлеме уйăрнă Варламова чĕн-се илсе тыră вырма хушрĕ. Хăй звеньевойсене каçчен мĕн тумаллине каларĕ те, агитаципе санитари повозки çинчен портфельне илсе, ял еннелле утрĕ.

— Мĕн тума чĕнтĕр, Бакланов юлташ?—ыйт-рĕ вăл колхоз правленине кĕрсенех.

Сĕтел хушшинче телеграмма вуласа ларакан председатель бригадир çине пăхрĕ. Вара, те савăнса, те тăрăхласа, сассăр кулчĕ.

— Чи малтанах плана епле тултарни çинчен сведени памалла. Райзо малтанхи эрнере мĕнле вырнине ыйтать. Унтан санăн халех разъезда тухса каяс пулать. Паян пирĕн пата хаклă хăна килет. Поезд тата тепĕр сехетрен çитет, хытă-рах чуптарсан вăхăтрах çитĕн. Акă, конюх ла-ша кӳлсе килчĕ.

— Кам килет? Тата мĕншĕн лава бригадира яратăн?

Бакланов татах чее куçĕсемпе хĕр çине пăхса кулчĕ.

— Пурне те пĕлсен час ватăлать, теççĕ. Кам

килнине ҫитсен курӑн. Киле кӗрсе тумланса тух. Кирек кама та аван тумланнӑ хӗрпе тӑрантас ҫинче юнашар ларса пыма авантарах, ну, вӗҫтер,—терӗ вӑл.

Бакланов ҫапла хӑтланни ҫилентерчӗ Ленӑна. Ҫапах та вӑл, хӑйӗнчен аслӑ ҫын хушнӑ ӗҫе тума кирлине сиссе, хирӗҫсе тӑмарӗ. Вӑл ҫӗнӗ тӑрантас ҫине тухса ларчӗ, ҫӑмӑллӑн ҫӳренӗ чух ҫеҫ кӳлме уйӑрнӑ „Ҫӗлен" ятлӑ хура лашана туртса ҫавӑрчӗ те, ҫул майлӑ киле кӗрсе, хӑпӑл-хапӑл тумтир улӑштарса тӑхӑнса, разъезд еннелле юрттарчӗ.

Кӑнтӑрла иртсен ҫеҫ ҫумӑр ҫунӑ пирки ҫул ҫинче тусан ҫук. „Ҫӗлен" сӗлӗ пусси хушшипе пуҫне ывӑтса ӳсӗмлӗн чупать. Ялтан виҫӗ ҫухрӑм кайсанах вӑрман пуҫланать. Йывӑҫсен сулхӑнне кӗрсен Лена лашана тата хытӑрах хӑвалама тытӑнчӗ.

„Кама илме ячӗҫ-ши? — шухӑшлать вӑл.— Ҫуркунне ҫул майлӑ „Союзутиль" сотрудникне лартса кайнӑччӗ. Хулара пурӑнакан каччӑ тӳрех хӑйӗн пӗлӗвӗпе мухтанма тытӑнчӗ. Ун шухӑшӗпе, ялта пурӑнакан хӗрсем хӑй пек „культурӑллӑ" ҫынна ҫеҫ кӗтсе пурӑнаҫҫӗ пулас. Вӑрмана кӗрсенех хӑй мӗнле шухӑшпа ман ҫумра ларса пынине пӗлтерчӗ. Вара ирӗксӗр урапа ҫинчен антарса хӑвартӑм. Колхозница нихӑҫан та хӑйӗнчен мӑшкӑлаттарас ҫуккине пӗлтӗр, терӗм. Паян килекен „хаклӑ хӑна" та хӑйне хӑй ҫав „утиль" каччи пек тытма пуҫласан, пирӗн

яла ан та пырса кӗтӗр, вӑрманах антарса хӑваратӑп".

— Ну, айта! Юрт уҫӑмлӑрах!—тесе тилхепе вӗҫӗпе тивертрӗ лашана Лена.

Ҫаптарасса кӗтме вӗренмен лаша, ӗрӗхнӗ пек, сиккипе чупма пуҫларӗ. Анчах шухӑша кайнӑ хӗр ӑна асӑрхамарӗ.

Кайсан-кайсан лаша пуҫне пӑрса каялла пӑхрӗ. Тӑрантас ҫинче ларакан хӗр хӑйне тек хӑваламаннине курса, вӑл татах малтанхи пек чупма пуҫларӗ.

„Ҫапла ҫав... Виктор мана хисеплесе, юратса пурӑнасси ҫинчен каларӗ. Анчах ҫур ҫул иртсенех ҫыру ҫырма пӑрахрӗ. Хулари хӗрсем мантран аванрах пек туйӑнчӗҫ пулӗ. Вӗсем илӗртнипе ҫеҫ мана пӑрахрӗ ӗнтӗ",—терӗ вӑл, темшӗн Виктор ҫинчен аса илсе.

Сасартӑк ҫывӑхрах паровоз сасси илтӗнчӗ. Вара тин разъезда ҫитнине туйса илчӗ Лена. Вӑл лашине кирпӗч ҫурт патӗнчи юпа ҫумне кӑкарчӗ те чугунҫул хӗрринчех ӳсекен пысӑк чӑрӑш ҫумне пырса тӑчӗ.

Хӗрлӗ ҫуртран разъезд начальникӗ поезда кӗтсе илме тухрӗ. Стрелки патне симӗс ялав тытнӑ стрелочник пырса тӑчӗ. Кӗҫех шултӑра йывӑҫсем хушшинчен симӗс вагонсем кӑкарнӑ поезд чашлатса тухрӗ. Поезд чул ҫурт умӗнче икӗ минутлӑха чарӑнчӗ. Пассажирсем чӳречесенчен кӑна пӑхкаларӗҫ.

Пиллӗкмӗш вагон ҫинчен ҫеҫ кӑвак плащ тӑхӑннӑ ҫын икӗ чемодан йӑтса анчӗ.

Поезд ҫинчен аннӑ ҫын тавралла пӑхкаларӗ, анчах йывӑҫ тӗлӗнче тӑракан Ленӑна курмарӗ. Вара тӑрантас кӳлнӗ лаша патне вӑйлӑ ҫын уттипе ҫӑмӑллӑн утрӗ. Лена унӑн ҫухависем ҫинче ылттӑн хӑю тытнӑ петлицӑсем пуррине курчӗ. Вӗсем ҫинче хӗреслесе хунӑ тупӑ кӗпҫисем, икшер хӗрлӗ кубик. Лена малтанах плащлӑ ҫын лейтенант-артиллерист иккенне, унтан вара хӑй кам иккенне те палласа илчӗ. Палласа илчӗ те, кӑшт ҫеҫ кӑшкӑрса ямарӗ.

Лейтенант чемоданӗсене тӑрантас патне лартрӗ. Унтан хӑй ҫине ӗненӳсӗр пӑхакан лашан лапчӑтнӑ хӑлхи айккине пӳрнисемпе хыҫрӗ, мӑйӗнчен, ӑмринчен аллипе шӑлчӗ.

— Ну, мӗнле пурӑнатӑн, „Ҫӗлен" тусӑм? Хамӑр колхозран мана хирӗҫ чи малтан эсӗ тухас терӗн-и?—калаҫма пуҫларӗ вӑл лашапа. Лаша, ӗлӗк хӑйне час-часах тыткаланӑ ҫынӑн сассине палланӑ пекех, пуҫне ун хулпуҫҫийӗ ҫине хӑпартса хучӗ.

— Анчах кам илсе килчӗ сана кунта?—терӗ лейтенант, татах тавралла пӑхкаласа.

— Эпӗ, Виктор!—терӗ те Лена хӑвӑрт утса ун патне пычӗ.

Вӗсем пӗр кана ним чӗнмесӗр пӗр-пӗрин ҫине пӑхса тӑчӗҫ.

„Эпӗ килессине пӗлсенех кунта тухса килнӗ. Тӳрех алла ҫавӑрса илес, тет пулӗ",—шухӑшла-

рĕ Виктор. Çавăнпа ун питĕнчен савăнăçлă кулă çухалчĕ, сăнĕ тăвăл умĕнхи çанталăк пек тĕксĕмленчĕ.

Ун пуçĕнчи шухăша Лена та часах тавçăрса илчĕ. Вара хĕр чĕри темскер хуйхине хĕсĕннĕ пек пулчĕ.

— Сывă пурăнатăн-и? — такам сассипе каласа ал тытрĕ Виктор.

— Лар, каçчен киле çитес.

Вĕсем иккĕшĕ тăрантас тĕпне юнашар кĕрсе ларчĕç. Виктор тилхепине тытса, лашана каялла çавăрса вăрман çулĕпе уттарчĕ. Хăй аяккалла пăхса темĕнле кĕвĕ шăхăрма тытăнчĕ. Лена шывланнă куçĕсене усса, ним чĕнмесĕр ассăн сывларĕ.

„Мана яни усăллă пулĕ тесе шутланă ĕнтĕ Бакланов юлташ, — шухăшлать Лена. — Чĕнмен хăна темрен те усал, теççĕ. Манăн та Виктор чĕнмесĕрех унпа хирĕç пулма юраман ĕнтĕ. Халĕ вăл ирĕксĕр хăй çумне сыпăçасшăн теме те пултарать".

„Мĕншĕн çилентĕм-ха эпĕ ун çине? — пăшăлтатать Виктор. — Тен, вăл ырă сунса çеç мана илме килчĕ пулĕ. Тен ĕç вăхăтĕнче никам та лава кайма килĕшменнине курса, хăй лаша кÿлсе пычĕ пулĕ. Ирĕксĕрех качча пырасшăн ĕнтĕ ку тени — ман пуçри фантази кăна мар-ши? Мĕн те пулин унăн кăмăлне уçмалли сăмах калас пулать."

„Айван! — тет ăшри пĕр сасă, — ытла та часах мантăн эсĕ çынсене. Этем яланах хăйне усă

паракан ĕçе тăвать. Лена та хăй çинчен хăвăртрах аса илтересшĕн разъезда пынă".

— А ну, „Çĕлен", кăтарт-ха колхоз лашисен чуппине! — тилхепине турткаласа каларĕ Виктор.

Кил еннелле малтанах туртăнакан лаша çил пек вĕçтерме тапратрĕ.

Яла çитиччен те калаçу çыхăнмарĕ. Уй хĕрринчи шкулпа танлашсан, Виктор, тилхепине Ленăна тыттарса, тăрантас çинчен анчĕ.

— Эсĕ чемодансене хамăр киле кĕртсе хур,— терĕ вăл, шкул еннелле утса.

Алăк умĕнче вăл палламан çамрăк хĕрарăм алăри ачине тап-таса тулли кăкăрне ĕмĕртнине курса, ун умĕнче чарăнчĕ.

— Петр Тарасчă килте çук-и?—ыйтрĕ Виктор.

— Эпĕ унăн арăмĕ, Надежда Яковлевна. Вăл кĕçех килет пулас-ха, кĕтсе ларăр.

— Кайран килĕп-ха. Сывă пулăр,—Виктор ятне каламасăрах урам тăрăх утрĕ.

Ик-виçĕ çул ĕлĕкрех çамрăк хĕрарăмсем ют çын куçĕ умĕнчех ачана кăкăр ĕмĕртекен марччĕ. Халĕ учитель арăмĕ хĕрелмерĕ те. „Курăр, эпĕ те ача амăшĕ пултăм! тенĕ пекех мухтавлăн тăчĕ ман умра", — мăкăртатрĕ лейтенант.

Уничене çитсен шыв ăсма аннă хĕрсемпе арăмсем ăна сырса илчĕç.

— Ах, Виктор-çке ку! — терĕ Кăшман Хĕветĕрĕн хĕрĕ Ульки.

— Лена тахçанах кĕтетчĕ сана.

— Ленăпа ман пек хĕрсем хулара та тĕксе сирĕлмеççĕ пулĕ, — кулса каларĕ Хурчăка Çтапанĕн кăçал çеç киле таврăннă хĕрĕ Чĕкеç.

— Мĕн эсир, мана хĕрсем шыраса çеç çӳрет тетĕр-им? Этемĕн урăх ĕç те темĕн чухлех, — тесе чĕрĕ унка витĕр тухрĕ Виктор.

Аслă пĕве патĕнче чарăнса тăчĕ вăл. Шыв хĕррине çитиччене тăсăлакан йывăç пахчине курсан, татах Ленăна аса илчĕ. Пайтах çывăрмасăр, вишня тĕмисем хушшинче шăпчăк юрланине итлесе çĕр каçнă çав пахчара. Ыталанса та сахал çӳремен йывăçсен сулхăнĕнче.

— Вĕсем çĕнĕ пӳрт лартнă, — терĕ вăл, тимĕр витнĕ пысăк çурта курса. — Пиччĕшĕ, Аркадий, инженер пулнă, тетчĕç, ялта электростанци тутарать тесе пĕлтернĕччĕ ман пата.

Виктор уçнă хапхаран килкарти еннелле пăхрĕ. Çак вăхăтра урамалла анчах утма вĕреннĕ ача тайкаланса тухрĕ. Вăл Виктор умне пырса тăчĕ те ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

Ачан хура куçĕсемпе кăтра çӳçĕсене, кулнă чухне пит çăмартийĕсем çине тухакан путăксене, хăлха çуначĕпе витĕнсе тăракан турпаллине курсан, Виктор телейлĕн кулса ячĕ.

„Ман пекех, куçĕсем, сăн-сăпачĕ — пурте манăн. Пĕчĕк чухне эпĕ те çавăн евĕрлĕ пулнă ĕнтĕ. Епле юрататъ пулас ăна Лена, — шухăшларĕ вăл, ачан илемлĕ таса тумтирне курса.

— Эсĕ кам ачи? — ыйтрĕ лейтенант, ун умне чĕркуçленсе.

— Анне... — терĕ ача, пахча еннелле тăсса.
— Анне? Ăçта анне? — тулли питçăмартинчен лăпкарĕ ăна Виктор. — Эсĕ мĕн ятлă?
— Анне... — тата хытăрах кăшкăрчĕ ача. Çак вăхăтра пахча алăкĕ уçăлса хупăнчĕ.
— Гриша, Гриша! Ăçта эс? — илтĕнчĕ арçын сасси килкартинчен.
— Анне-е-е! — тăсса, хаярланса кăшкăрчĕ ача.
— Аçу пекех матур пулнă эсĕ, — терĕ те Виктор, ачана ытараймасăр хулпуççийĕ çине йăтса лартрĕ.
Урама шлепке тăхăннă шурă костюмлă çамрăк çын тĕрĕллĕ туя тытса тухрĕ.
— Виктор Гаврилч, эсир-им? — терĕ вăл, ача çĕкленĕ лейтенант патнелле утса.
— Аркадий Порфирч, сывă-и?
— Сывах-ха, хăвăр мĕнле?
— Эпĕ те сывах.
— Хăçан таврăнтăр?
— Тин кăна килетĕп-ха. Эсир ялта Ильич лампăчки çутма хатĕрленетĕр, терĕç пулас.
— Кĕркуннеччен электростанцине хода яратпăр. Плотина хатĕр ĕнтĕ. Динамо илме государство çирĕм пин тенкĕ кивçен укçа пачĕ. Ыран кайса курăпăр-и?
Гриша ашшĕ картузĕ çинчи хĕрлĕ çăлтăра уйăрса илме хăтланчĕ. Анчах çăлтăр вырăнтан та сикмерĕ.
— Тетте! — терĕ вăл пурне те ĕнентерес тенĕ пек.

Викторпа Аркадий кулса ячĕç.

— Кĕретĕр-и пирĕн пата, калаçкалăпăр.

— Кĕрес пулĕ, Гриша пур-пĕрех киле ярас çук, — терĕ лейтенант.

* * *

Лена Виктор ашшĕсен умĕнче лашине тăратсан тин каялла çавăрăнса пăхрĕ. Çывăхра лейтенант çукки пĕрре те тĕлĕнтермерĕ ăна. Вăл йывăр чемодансене килкартишне çĕклесе кĕрсе, хăмăт çĕлесе ларакан старике ывăлĕ киле таврăнни çинчен каласа, лашине конюхсене кайса пачĕ.

Колхоз правленийĕ умĕнче ăна Бакланов савăнăçлăн хирĕç пулчĕ.

Анчах кӳтсе çитнĕ хĕр, ун çине пăхмасăр, хăвăрт утса иртрĕ.

Киле çитсен пӳртри арçын сассисем тĕлĕнтерчĕç Ленăна. „Мана курайман çынсем Виктор ман çумран яла кĕнĕ чух анса кайни çинчен пиччене каласа пама килнĕ пулĕ", — шутларĕ вăл.

Пӳрте кĕрсен, Гриша Виктор арки çинче выляса ларнине курсан, вăл савăннипе тата кăмăлĕ тулса çитнипе кăшт çеç йĕрсе яраймарĕ.

— Лена, ăсса кил-ха ăвăс пăрнă сăра, — терĕ Аркадий.

Сăра ĕçнĕ чух арçынсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи событисем çинчен калаçрĕç. Лена автан пусса яшка пĕçерчĕ. Каçхи апата ларас умĕн

тырă вырнă çĕртен амăшĕ, Унерпи кинемей, таврăнчĕ. Сĕтел хушшинче ларнă чух ватăлма маннă карчăк бригадăра ăмăрту йăлана кĕрсе вырнаçни çинчен, вăл ĕçре хăйĕн хĕрĕ мухтавлă вырăн йышăнни çинчен каласа пачĕ.

Апат çисе тухсан, Аркадий, плотинăна тĕрĕслеме каятăп тесе, хăнаран каçару ыйтса, пÿртрен тухрĕ, амăшĕ ĕне сума кайрĕ. Пÿртре Викторпа Лена çеç юлчĕç.

Тепĕр сехетрен, килти ĕçсене пуçтарса кĕрсен, Унерпи кинемей юнашар пÿлĕмре хĕрĕпе Виктор шăппăн калаçнине илтрĕ.

— Хамăр çĕршывра ача çуратакан хĕрарăмсене пурте хисепленине пĕлетĕп пулин те, хăшпĕрисем хам çине тăрăхласа пăхнă пек туйăнатчĕ. Эс килессе кĕтнипе çеç чăтса пурăнтăм. Çар училищинче çăмăлттай пулма мар, çемье ыйтăвĕ çине те ытти общество ĕçĕ çине пăхнă пекех тарăннăн пăхма вĕрентеççĕ, — терĕ пичче. Вара сана шанма пĕр самантлăха та пăрахмарăм. Паян колхоз председателĕ, эс килессине каламасăрах, разъезда ярсан, вăл та мăшкăлать пулĕ, терĕм.

— Эсĕ вара эп килессине пĕлмен-и?

— Пĕлмен. Бакланов „хаклă хăна килет“, тесе çеç каларĕ.

— Бакланова та чĕнĕпĕр туя, — кулса ячĕ Виктор.

Çак калаçăва илтсен, хăйĕнчен ыйтмасăрах хĕрĕ туй тума хатĕрленнине сиснĕ Унерпи ки-

немей, юриех пушмакĕсемпе кăштăртаттарса, шалти пÿлĕме кĕчĕ. Çамрăксем юнашарах сывăрма выртнă иккен. Кинемей, вĕсем çине юратупа тулнă куçĕсемпе савăнса пăхрĕ те, шăппăн утса, татах тулти пÿлĕме тухса, Гриша сывракан койка патне пырса ларчĕ.

„Ленăпа Аркадий каланиех чăн пулчĕ. Эпĕ ĕç кун пек ăнăçлăн вĕçленессе шанманччĕ", — тесе куçĕсене шăлчĕ.

## ХИСЕПЛĔ ВАХТĂРА

Вăл ĕç Бессараби халăхне Румыни боярĕсен пусмăрĕнчен хăтариччен пулнăччĕ. Пирĕн N-лă застава Днестр шывĕ хĕрринчи чикке сыхласа тăратчĕ. Революциллĕ уяв чух хурал тăнине эпир Сталинла вахтăра тăни, теттĕмĕр. Пурин те тăрас килет çав чаплă вахтăра. Анчах унта чи примерлă, социализмлă ăмăртура мала тухнă боецсене çеç яраççĕ.

Çав кун эпĕ телейлĕ пултăм. Мана Сталинла вахтăна ямалла турĕç. Хурал начальникĕ сержант Петров смена умĕн мана чĕнсе илчĕ те, эпĕ устава епле пĕлнине тĕрĕслерĕ, ман пост хăш вырăнта пулассине, дозорсем хăш тĕлтен иртсе çӳренине кăтартрĕ.

— Асту, Павлов юлташ!—терĕ вăл.—Аслă уявсенче пирĕн савăнăçа тĕксĕмлетесшĕн халăх тăшманĕсем ытларах сăтăр тума тăрăшаççĕ. Застава начальникĕ сире чи ответлă пост шанса парать. Сталинла вахтăна ăнăçлă тăрса ирттерме телей сунатăп!

Çак сăмахсемпе вăл мана чăнкă çыран хĕррипчи окопа илсе пырса хăварчĕ.

Эпĕ хăва тĕмисем хушшипе малалла пăхатăп. Умра анлă шыв юхса выртать. Çурхи каç тĕттĕмлене пуçланă. Днестр леш енче, кăшт тăварахра, хăмăш витнĕ çуртсем курăнаççĕ. Вăл—Бессараби ялĕ. Ял тĕлĕнче Днестр хуçланнă чавса пек кукăрлать. Вара ун шывĕ, тӳрĕ юхнă пирки, эп ларакан çырана килсе çапăнать, тĕрлĕрен çӳп-çап юхтарса килет.

Эпĕ тавраналла шăтарас пек пăхатăп, тинкерсе итлетĕп. Хыçалта, молдаван колхозĕнче хĕрсем юрлаççĕ. Кассăн-кассăн килекен нӳрĕк çил хăва тĕмисене чӳхентерет. Ун пек чухне пĕлтĕрхи хăрăк çулçăсем чăштăртатаççĕ: çын утса çывхарнă пекех туйăнать. Çавăнпа эпĕ тата хытăрах тинкерсе пăхма тытăнатăп.

Сасартăк Бессараби ялĕнче кăшт çеç палăракан кăвак çутă мăчлатма пуçларĕ.

„Ку ахаль мар. Темĕнле сигнал пáраççĕ пулас“, шухăшларăм эпĕ. Вара, хам хыçран утса иртекен нарядри юлташа сигналпа чĕнсе илтĕм те ыттисене те хам курни çинчен пĕлтерме хушрăм.

— Пуçланать!—терĕ юлташ.

Вăл хырăмпа шăвăнса йывăç тĕмисем хушшине кĕрсе кайрĕ.

Çав самантра шывра кĕсменсемпе шăмпăртаттарни илтĕнчĕ. Тинкерсе пăхрăм. Ман патран пĕр икçĕр-виççĕр утăмра, тăварахра, кимĕ çывхарса

килни курӑнчӗ. Кӗҫех вӑл ҫыран хӗрне ҫитсе ӑшӑх вырӑна ларчӗ. Ҫав самантрах хӑйӑр ҫине темиҫе ҫын сиксе тухрӗҫ те хӑва тӗмисем патнелле чупрӗҫ.

— Стой!—илтӗнчӗ нарядра тӑракан Егоров сасси.

Тӗттӗмре, ҫиҫӗм ҫиҫнӗ пек, темиҫе хутчен вут хыпса илчӗ. Унтан пӑшал сассисем илтӗне-илтӗне шӑпланчӗҫ.

„Тӑшмансем нумайӑн. Егоров ҫывӑхӗнче пурӗ те иккӗн ҫеҫ, заставӑран пулӑшу киличчен чарса тӑма пултарӗҫ-ши вӗсене?“ шухӑшлатӑп эпӗ. Ман вӗсене пулӑшма каяс килет, анчах нарядран кайма юрамасть.

Тӑшмансем автоматлӑ пӑшалсенчен таттисыпписӗр переҫҫӗ. Ман юлташсем лайӑх тӗллесе переҫҫӗ пулас, вӗсен пӑшалӗсем сайрахутран ҫеҫ сасӑ кӑлараҫҫӗ.

Чикӗ урлӑ каҫма тӑрӑшакан тӑшмансем питӗ чее. Юлашки вӑхӑтра вӗсем пӗр-пӗр шпиона чикӗ урлӑ каҫарас пулсан, юриех тепӗр вырӑнти пограничниксем ҫине тапӑнаҫҫӗ. Ҫапӑҫу пынӑ вӑхӑтра пограничниксем пӗр вырӑна пухӑнсан, хайхи шпион тепӗр вырӑнтан систермесӗр каҫса каять. Ҫакна аса илнипе эпӗ хам умри ҫырана тата аванрах сӑнама тытӑнатӑп. Шыв, малтанхи пекех, тӳлеккӗн юхать. Ним сас-чӳ та ҫук. Тура ҫеҫ виҫӗ хутчен граната ҫурӑлни илтӗнчӗ. Егорова хӗссе ҫитереҫҫӗ пулас. Тахӑшӗ тискеррӗн ҫухӑрса ячӗ.

„Ăна пулăшма каяс мар-ши?“—ыйтатăп хамран хам.

Унччен те пулмарĕ, шыв çийĕнче темле хура мĕлке курăнчĕ. Вăл ман паталлах ишсе килет.

„Мĕн ку? Кимĕ мар, çын евĕрлĕ те мар... Мĕн ку?“

Çак шухăшпа окопран шăвăнса тухатăп та, чăнкă çыранган шыв хĕрне анса пысăк чул тĕлне пытанса выртатăп. Хура мĕлке çывхарсах килет. Кĕçех вăл темĕскертен çакланса шыв хĕрринчен вунă утăмра чарăнчĕ.

— Каска,—терĕм эпĕ, хура мĕлкене палласа.— Çĕрсе ўкнĕ хăрăк чăрăш каски. Леш енчи вăрмантан шыв юхтарса илсе килнĕ пулас ăна.

Анчах та эп пурпĕрех, каскаран этем пуласса кĕтнĕ пек, ун çине тимлĕн пăхса тăтăм. Тăрук шыв пăкăртатма пуçларĕ. Кĕçех çавракa хумсем саланма тапратрĕç. Тепĕр самантран каска çумĕнче этем пуçĕ курăнса кайрĕ.

— Аллусене çўлелле!—сиввĕн кăшкăртăм эпĕ, винтовкăпа тĕллесе.

Сăран тумтир тăхăннă çын каскаран тытнă аллисене çўлелле çĕклерĕ те пăкăртаттарса шыва путрĕ.

„Вăл йывăр тумтир туртнипе путса вилме пултарать“, шухăшларăм эпĕ. Унтан ăшра утмăла çитиччен шутларăм. Унччен те пулмарĕ, пĕр çирĕм-вăтăр утăм анатарахра хайхи çын тепĕр хут курăнса кайрĕ, вăл шывран сиксе

тухрĕ те, тахҫанах пăрахса кайнă пулăҫă пӳрчĕ патнелле чупма пуҫларĕ.

— Стой! Пурпĕрех тытатăп!—тесе, ун хыҫҫăн чупрăм. Вăл, каялла ҫавăрăнса, сылтăм аллине пичĕ патне илсе пычĕ. Ҫав самантрах ман хăлха патĕнчен чул ҫумне ҫапăннă рикошетланнă пуля пăван пек нăрласа иртсе кайрĕ. Ирĕксĕрех чулсем хушшине пытанма лекрĕ.

„Пурпĕрех чĕррĕн тытатăп", тесе эпĕ хайхи пӳрт патнелле чулсем хӳттипе хырăмпа шума пуҫларăм. Тăшман пӳрт хыҫне пытанчĕ. Кĕҫех кĕтесрен ман паталла маузертан пеме тытăнчĕ. Ҫапах та ик-виҫĕ минутран пӳрт патне ҫитрĕмҫитрĕмех. Вара, шăши хыҫҫăн чупакан кушак пек хыҫран сассăр чупса ҫитсе, ăна мĕнпур вăйран хăлха-чиккинчен янлаттарса ятăм. Ун пуҫĕ стена ҫумне ҫапăнчĕ, аллинчи маузерĕ тухса ӳкрĕ. Унтан хăй персе анчĕ. Эпĕ унăн маузерне илтĕм те сăран тумтир тăхăннă ҫынна тăн килсе кĕрессе кĕтме пуҫларăм.

Тĕнче тĕлĕнмелле шăпланчĕ. Тура пăшал сассисем илтĕнми пулчĕҫ. Кăнтăр енчен хăпарнă пĕлĕтсем ҫăлтăрсене хупларĕҫ. Ҫил те шăпланчĕ. Днестр шывĕ, хуралнăҫемĕн хуралса пырса, каҫхи тĕттĕмпе хутăшса кайса, курăнми пулчĕ. Бессараби ялĕнчи юлашки хăйҫути те сӳнчĕ.

Хыҫалта карăш авăтни илтĕнчĕ. Ку хурал начальникĕ сывхарнине пĕлтерекен сасă. Чăнах та, ик-виҫĕ минутран мана шăппăн чĕнчĕҫ. Эпĕ сас патăм.

— Ну, мĕнле?—ыйтрĕ сержант Петров.

— Выртать, — терĕм эпĕ, сăран тумтирлĕ çын çине кăтартса,—тура мĕнле?

— Тăшман енчен вилнисем пиллĕк, аманнисем—иккĕ. Виççĕшĕ чĕррĕнех парăнчĕç. Пирĕн енчен Земцовпа Захаров йывăр аманнă,—терĕ сержант. Унтан вăл каялла çавăрăнчĕ.—Санитарный инструктор, килсе пăх-ха çак çынна!

Шыв хĕррипе санинструктор чупса анчĕ. Вăл, чĕркуçленсе ларса, выртакан çын аллине тытса юн тымарĕ тапнине тĕрĕслерĕ.

— Тапать. Ăçтан аманнă?—ыйтрĕ вăл.

— Суранланман. Хăлха чикки панипе çеç тăнне çухатнă,—терĕм эпĕ...

Ирччен застава начальникĕ Абрамов капитан тыткăна лекнĕ тăшмансене штаба ăсатма хушрĕ. Вĕсем хĕвеланăçĕнчи пĕр патшалăх разведкинче ĕçлекен агентсем пулнă мĕн. Эп тытнийĕ, вĕсенчен асли, пирĕн çĕршыва сăтăр тума килесшĕн пулнă. Тăшмансемпе хастарлăн кĕрешнĕшĕн Земцовпа Захарова Хĕрлĕ Ялав орденĕ пачĕç. Егоровпа мана нарком ята çырнă кĕмĕл сехет парса парнелерĕ.

# САНИНСТРУКТОР

Кӗмӗл пек ҫуталса выртать Ладога кӳлли. Унӑн кӑкӑрӗ тӑрӑх шурӑ финсен банди йӗлтӗр йӗрӗсем, ҫӗнӗ йӗрсем тӑсса хӑварнӑ. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫара тылран тапӑнма шут тытнӑ пулнӑ та, халь чакса пыраҫҫӗ—тараҫҫӗ. Хуса ҫитмелле вӗсене, ҫӗмӗрсе тӑкмалла.

Иккӗмӗш кун йӗр йӗрлет ӗнтӗ вӗсем хыҫҫӑн хӗрлӗ отряд. Боецсем пурте шурӑ халатсем тӑхӑннӑ, хулсем урлӑ автомат-пӑшалсем, пиҫиххисем ҫумне гранатӑсем ҫакнӑ.

Виҫӗ пая уйрӑлса малаллаваскать отряд. Малта—ҫамрӑк комиссар ҫул уҫса пырать. Отряд хыҫӗнче—патронсемпе гранатӑсем тиенӗ ҫунасем. Вӗсене туратлӑ мӑйракисене каҫӑртса чупакан пӑлансем туртса пыраҫҫӗ. Чи кайри ҫуна ҫине куҫса ҫӳрекен хирти лазарет вырнаҫнӑ. Лазарет начальникӗ санинструктор Ида Шмуленсон пӑлана патакпа васкатать.

Ида—агат пек йӑлтӑрти хура куҫлӑ, ҫавӑн пекех йӑм-хура кӑтра ҫӳҫлӗ, хытанкарах хӗр.

Гродно патӗнчи хӗрӳллӗ çапăçура унăн аш-шӗ, майор Шмуленсон, паттăр вилӗмпе пуçне хунине пӗлсенех, вăл нарком патне Çара илме ыйтса çыру янă. Ун чухне вăл медицина ин-ститучӗн иккӗмӗш курсӗнче вӗреннӗ пулнă. Акă, виçӗ уйăх ӗнтӗ вăл, пӗр шикленмесӗр, хаяр çапăçура аманнă красноармеецсене вăхăтра пулăшу парса, вилӗмрен те, асапран та хăта-рать.

Ротăра пурте хисеплеççӗ Идăна. Чипер хӗр вăл. Ăшă кăмăллă. Яланах савăнăçлă. Чылай боецсем куç хываççӗ ун çине. Чăнласах юрат-малли хӗр вăл, лайăх юлташ пулмалла хӗр. Пуринчен ытла отряд начальникӗ лейтенант Муравьев кăмăллать пулас ăна. Яланах ăшшăн пăхать ун çине. Идăна курсанах, куçӗсем ял-кăшса илеççӗ унăн, сасси чӗтренсе илет.

Васкатать Ида пăланӗсене.

— Ида!—илтӗнет ăна сасартăк ăшă та çирӗп сасă.

Ида çаврăнса пăхать. Ун çумӗнчен лейтенант Муравьев иртсе пырать. Идăн пичӗсем хӗрелеç-çӗ. Чӗри хăвăрт-хăвăрт тапма пуçлать. Вăл та кăмăллать пулас çав харсăр лейтенанта. Анчах вӗсем хăйсен кăмăлӗсене пӗр-пӗрне пӗлтерме хăяймаççӗ. Яланах вара, тӗлпулсан мӗн тусан, юратуран тем тери инçетре тăракан япаласем çинчен кăна калаçаççӗ вӗсем. Куçӗсемпе кăна пӗр-пӗрне ачашласа пăхаççӗ.

— Муравьев юлташ! Финсене хуса çитсен,

эпĕ те винтовкăпа атакăна кĕрес тетĕп, — çиĕрппĕн татса калать Ида.

— Ерçÿ пулсан!—йăл-л кулса илсе, ăшшăн таврăрать ăна командир.

Йĕлтĕрçĕсен колонни ытлашши тăсăлать. Муравьев взвод командирĕсене боецсене пĕр çĕрелле пуçтарма хушать. Хăй çуна çинче ларакан хĕре аллипе сулса хăварать те, малта пыракан юлташĕсем патне вĕçтерет. Ида ăна çав тери ăшшăн пăхса ăсатать.

Малаллаваскать отряд. Çил пек вăшкăнаççĕ йĕлтĕрçĕсем. Вăшкăнмасăр,—чылайăшĕсем çур ĕмĕрне йĕлтĕр çинче ирттернĕ пулать те! Авă, комиссарпа юнашар пыракан Наумов, Хĕрлĕ Çара киличчен Уссури шывĕ хĕрринчи тайгара виçĕ çул хушшинче пĕр-пĕччен вуникĕ тигр тытнă. Ыттисем те, е Çĕпĕр тайгинче, е Карели вăрманĕнче çуралса ÿснĕ каччăсем. Маттур каччăсем!

Хĕвел анса ларас умĕн, хĕрлĕ паттăрсем кÿлĕ хĕрринчи чăтлăх вăрман патне çывхарчĕç.

Тÿпере тăшман çине бомбăсем тăкса хăварнă эскадрилья каялла таврăнни курăнать.

Каçхи канăва чарăнма вăхăт çитет. Анчах тăшман хăварнă йĕрсем ытла та çĕнĕ-çке-ха,— чарăнса тăма юрамасть, халех хуса çитсе лапчăтса тăкмалла вĕсене. Çавăнпа никам та кану çинчен шухăшламасть.

Çак вăхăтра Муравьева разведка взвочĕн командирĕ янă донесение килсе пачĕç. Вăл ăна

хăвăрт вуласа тухрĕ те, отряда лапсăркка чăрăш айне пуçтарчĕ.

— Хатĕрленĕр, юлташсем! Шурă банда, ураран ўкес пек ывăннă пирки, кунтан пĕр километрта чарăнса тăнă. Северов юлташ! Акă, пăх картă çине: шурă финсем çак тĕмеске çине вырнаçнă. Эсĕ хăвăн взводупа вĕсем çине сылтăм енчен тапăнатăн. Оулайнен юлташ, эсĕ сулахай енчен çунтаратăн. Эпĕ хам Николаев взвочĕпе пĕрле тўрĕ касса кĕретĕп. Ман заместитель—пĕрремĕш взвод командирĕ Северов юлташ, атакăна хĕрлĕ ракетăсем çиçме пуçласан кайăр. Ыйтусем пур-и?

— Ăнлантăмăр, лейтенант юлташ!—ответлерĕç взвод командирĕсем.

Кĕçех виçĕ пая уйрăлнă отряд, йывăçсем çуммипе йăпшăнса, вăрмана кĕчĕ...

Çапăçу дозорсем хушшинче пуçланчĕ. Таçта, малта, хырсем айĕнче, автомат-пăшал шатăртатма пуçларĕ. Боецсем, хĕрлĕ ракета çутăлсанах, пур енчен те çавăрса илнĕ тăшмана хĕсме тытăнчĕç, штыклă атакăна кĕрсе кайрĕç.

Муравьев умĕнче икĕ красноармеец чупаççĕ. Вунă утăм пек кайсанах пĕри юр çине йăванса юлчĕ. Ана кам пенине çийĕнчех асăрхарĕ лейтенант: пысăк хыр çумне шюцкор лăпчăнса тăнă, вăл хăй çывăхĕнчен чупса иртекен боецсене пере-пере ўкерет. Муравьев хăвăрт пистолетне çĕклерĕ те, икĕ хутчен персе ячĕ. Шурă финн, каялла çаврăнса, месерле персе анчĕ.

Икĕ утăм тума çеç ĕлкĕрчĕ Муравьев, ун умĕнчех граната çурăлчĕ. Темĕнле курăнман çын кăкăртан тукмакпа çапнă пек туйăнчĕ ăна. Вăл юр çине тĕшĕрĕлсе анчĕ... Хĕрсе кайнă боецсем асăрхаймарĕç пулас çав ăна. Мĕншĕн вăхăтра сылтăм еннелле пăхмарĕ-ха вăл,—унта пытанса тăракан офицера маларах асăрханă пулсан, вилĕм тӳрех ун пуçĕ çине аннă пулĕччĕ!

Анчах—телей! Куçĕсем уçăлчĕç унăн. Хăлхисем пăшал сассисем инçетре илтĕннине туйрĕç. Хăйĕн отрячĕ шурă бандăна аякка хуса кайса, аркатса тăкнине ăнланчĕ вăл. Халех юлташĕсем патне тăрса чупасшăнччĕ вăл, анчах урисемпе сулахай алли итлемеççĕ-çке ăна. Муравьев айĕнчи юр хĕрелнине асăрхарĕ те, хăй суранланнине пĕлчĕ. Пулăшу ыйтас килчĕ унăн. Анчах никам та курăнмарĕ çывăхра.

Вăл каллех тăма хăтланчĕ. Мĕншĕн çав териех йывăр-ши пуç? Тăхлан шăратса яман пуль-çке ун ăшне? Мĕншĕн кăштах та пулин çĕклемелле мар-ха ăна?.. Тăрăшни сая каймарĕ: Муравьев хуллен пуçне çĕклесе пăхрĕ: ун патнеллех кĕрĕк çанни çумне хĕрлĕ хĕреслĕ шурă пир çыхнă санитарка çывхарать. Ида!—палласа илчĕ ăна лейтенант, чĕнме хăтланчĕ, сасси тухмарĕ. Хускалнă пуçĕ йывăррăн юр çине ӳкрĕ. Муравьев куçне хупрĕ.

Пысăк хыр вулли хыçĕнче выртакан Муравьева асăрхаймарĕ пулас çав Ида. Сасартăк такам хăрăлтатнă сасса илтрĕ те, ун-кун пăхкаларĕ:

инçе мар, лапамра, пĕр çын выртнине асăрхарĕ Ида: финн салтакĕ иккен. Ун хырăмне кинжаллă штыкпа чиксе çурнă. Епле асапланать вăл. Унăн куçĕсем пусма çыхса пăрахнă така куçĕсем пек чарăлса кайнă. Юнпа вараланнă аллисем йăтăнса тухнă пыршисене çурăк хырăма каялла чикесшĕн тăрмашаççĕ.

Медицина суранланнă çынсене, вăл тăшман пулсан та, пулăшу пама тивĕç. Ида хăвăрт сумкинчен бинт кăларчĕ те, салтакăн кĕрĕкне хывса, хырăмне çыхса тирпейлерĕ.

— Юлташ... Шмуленсон...—пырса кĕчĕ Ида хăлхине тăвăннă сасă. Вăл, шартах сиксе, ура çине тăчĕ. Тăчĕ те—аманнă Муравьева асăрхарĕ. Анакан хĕвел çуттинче вĕсен куçĕсем хирĕç пулчĕç. Хĕрĕн пичĕ тăруках кăвакарса кайрĕ.

— Командир!.. Юлташ Муравьев...—ыткăнчĕ ун патнелле Ида.

Çак самантрах темĕн хыттăн кĕрĕслетрĕ. Ида, йăсăрланса хăпарнă юрпа пĕрле çĕкленсе илсе, çĕре ӳкрĕ. Муравьевăн чĕри çурăлас пек ыратса кайрĕ. Ун çумĕнчех такам чупса иртни илтĕнчĕ: финн офицерĕ, аманнă салтакăн, финн салтакĕн хырăмне çыхса тирпейленĕ Ида çине граната пăрахакан финн офицерĕ! Тарать иккен вăл! Муравьев, шăлне çыртса, пуçне хыр вулли çумне тĕрĕнтерсе çĕклерĕ те, таракан офицер еннелле пистолетĕнчен виçĕ хутчен печĕ. Ирсĕр офицер, сулăнса-сулăнса кайрĕ те юр çине тăрăнчĕ.

— Ил кирлине, йытă! Ил!—пăшăлтатрĕ Муравьев калама çук пысăк курайманлăхпа. Вăл Ида еннелле пуçне çавăрчĕ: Ида месерле ӳкнĕ, унăн юбки чĕркуççирен çӳлерех уçăлса кайнă.

— Идăчка... таса чун!—пăшăлтатрĕ каллех Муравьев,—епле хисеплетчĕç сана боецсем! Пурин куçĕ умне те вĕçен-кайăк пек тасан курăнаттăн эс. Идăчка... Çук, вилсен те, чĕрĕ чух типтерлĕ çӳренĕ пекех, типтерлĕ выртас пулать сан...

Йывăр суранланнă лейтенант, сылтăм чавси çине тĕренсе, кĕлеткине малаллах шутарать: урасем итлемеççĕ пулсан та, сывă юлнă алă малаллах куçма пулăшать.

Хуллен, калама та çук хуллен шăвăнать Муравьев. Ун хыçĕнчи юр юнпа хĕрелсе юлать. Вăл часрах хĕрĕн чĕркуççийĕсене витсе хурасшăн.

Акă, Муравьев Ида патне асаплăн шăвăнса çитрĕ те, унăн хура юбкине урисем çине витрĕ.

Вăрман шăпланчĕ. Çывăхранах аллисене каялла çыхнă шюцкорсен ушкăнне илсе кайрĕç. Темиçе боец хăйсен юратнă командирĕ тавра кĕпĕрленчĕç. Такăшĕ унăн урине иода сĕрет, çемçе бинтпа çыхать...

Хĕрлĕ хĕреслĕ çунатсене сарса, аманнă паттăрсен çывăхне самолет кĕрлесе анать.

Аякра хаяррăн тупăсем кĕрслетни илтĕнет.

# ТĂВАН ÇĔРШЫВШĂН

(*Лейтенант дневникĕнчен.*)

Шăхăрать çил. Кантăк ванчăкĕ пек кĕрпеллĕ юр пите касать. Хĕвел ансанах, ртутьлĕ термометр шăнса çурăлчĕ. Йывăççем пăрланнă, çĕр çинче пăр. Мăя та кĕрĕкĕн çемçе çухи вырăнне шăннă пăртан пулнă сивункă пăвать. Анчах вут пек вĕри эпир.

— Тăван çĕршывшăн!—янăрать сасă.

— Сталиншăн!

— Совет халăхĕшĕн!..

Хурçă каска тăхăннă çынсем ӳке-ӳке чупаççĕ, хырăмпа шăваççĕ. Малта — вут-хĕм сирпĕтсе тăракан ДОТ[1]. Ун таврашĕнче татти-сыпписĕр снарядсем çурăлаççĕ. Çапăнса арканакан хурçă сасси, тӳпене хуплакан хура тăпрапа кăвакарнă юртан сирпĕнекен çавраçил, свинецлă çумăр, моторсен шавĕ... Кăвак-хуппи курăннă пек пĕр

[1] Долговременная огневая точка—пулеметсемпе е тупăсемпе пеме бетонпран тунă вырăн.

саманта тавралăх çутăлать. Вара татах бомбăсем алталаса пĕтернĕ çĕр пичĕ çиййĕн хурçă каскăллă çынсем шăвăнни курăнса каять.

— Сталиншăн!—пĕтĕм пĕвĕпе тӳрленсе кăшкăрать политрук.

Çав самантрах ун питĕнчен шурă халат çине хăмач пек хĕрлĕ юн пĕрхĕнет. Вăл çĕре тĕшĕрĕлет. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Политрук сиксе тăрать те, сулахай аллипе питне тытса, хурçă каскăллă красноармеец умне тухса, малалла чупать.

— Тăван çĕршывшăн!

— Совет халăхĕшĕн!

— Малалла! Ур-р-р-а-а!

Тăпра тĕмисем тĕлĕнчен тăрса хĕрлĕ паттăрсем малалла чупаççĕ. Урнă ДОТ тавраллах çулăм сурма тытăнать. Рикошетпа ывтăнакан пульăсен сасси йышланнăçем йышланса пырать. Тĕнче тăвăл умĕнхи анăç пек хĕрелет.

Эпĕ политрука хăваласа çитетĕп. Вăл тек питçăмартине аллипе тытмасть. Юн тĕлсĕр мар, халăха усă кӳрекен ĕçшĕн юхать пулсан, сан сурану чăн-чăн идейăшăн çапăçнă çĕрте пулнă-тăк—çав суран ыратни сисĕнмест.

Пĕр самант хушши çĕр çумне пĕкĕрĕлсе, пĕрле чупатпăр. Анчах политрук юлма тытăнать. Эпĕ çавăрăнса пăхатăп. Унăн сулахай алли пушă çанă пек кăна силленсе тăрать. Иккĕмĕш пуля унăн хул шăммине ватнă иккен.

вăл ман çине пăхса илет. Унăн куçĕсем çĕнми харсăрлăхпа çунаççĕ. Вăл сылтăм аллинчи гранатăна вăтăр утăмри шăпланма пуçланă ДОТ çине ывăтать. Çав самантрах ăна виççĕмĕш пуля çапса ӳкерет.

— Лейтенант юлташ,—тет вăл, хăйпе юнашар выртсанах ман алăран тытса,—пулăш ура çине тăма! Манăн ДОТ çине улăхмасăр вилес килмест.

— Шăвăнăр каялла,—тетĕп эпĕ.—Тепĕр минутран ДОТ пирĕн пулать. Пысăк тав паттăрлăхшăн.

— Большевиксем каялла каймаççĕ. Çĕкле мана! Сывă пултăр коммунизм!

Эпир татах малалла чупатпăр. Манăн ура хыт çĕртен уйăрăлать. Эпĕ темле шăтăка сикетĕп. Тепĕр самантран шăтăкран сиксе тухатăп та ДОТ умĕнче чӳхенсе тăракан политрука куратăп. Акă вăл пиçиххи çумĕнчен юлашки гранатине вĕçертсе илсе амбразура ăшне ывăтать. Хăй, çав самантрах каснă йывăç пек тĕшĕрĕлсе, амбразурăна кĕлеткипе мăклать.

Красноармеецсем снаряд воронкисемпе усă курса, хырăмпа шуса ДОТ-а çавăрса илчĕç. Вут-хĕм суракан амбразурăсем çине чулсем, шăннă çĕр канташкисем, пăр татăкĕсем ывтăнма тытăнчĕç. Тепĕр самантран тискер ДОТ улаçăла тăпра айне пулса шăпланчĕ.

— Тухăр Маннергейм бандичĕсем!

— Тухăр, шиклĕ каюрасем, хăвăр шăтăкăр-

тан!—кăшкăраççĕ хĕрлĕ паттăрсем, бетон стена çумĕнчи тимĕр алăка прикладпа çапса.

Алăк уçăлать. Çиҫçе шăтăкран тар тĕтĕмĕпе вараланнă хура питлĕ офицер хыççăн шюцкорсен банди аллисене çӳлелле çĕклесе тухать. Вĕсен куçĕсем тĕттĕмри шакалăнни пек ялкăшаççĕ.

Пĕтрĕ сирĕн пурнăçăр, ирсĕр тăшман! Айăпсăр çынсен юнне тăкнăшăн Суоми халăхĕ умĕнче, нумай миллионлă совет халăхĕ умĕнче, пĕтĕм тĕнчери пусмăрти халăх умĕнче ответ тытма лекет.

Сылтăм енче татах урра кăшкăрни илтĕнет. Унта та пирĕн паттăрсем ДОТ-а атакăлаççĕ.

* * *

Сĕм тĕттĕм. Выборг енче хутран-ситрен снарядсем çурăлни илтĕнет е ракета çиççе хăпарать те, пĕлĕтре арканса, çĕре тăкăнать. Тĕтре çăралса пырать.

Чакакан белофинсем çунтарса янă дачăра сивĕ. Ура айĕнче кăмрăкпа штукатурка катăкĕсем кăчăртатаççĕ. Кĕтесре хăрăмпа вараланнă Венерăн гипс статуи тайăлса ларать.

Батальон командирĕ мана приказ парать. Унăн аллинче икĕ пуçĕнчен те шĕвĕртнĕ хĕрлĕ-кăвак карандаш. Унпа вăл картă тăрăх йĕрлет. Хĕрлĕ йĕрĕ вăрман витĕр тинĕс хĕрне тухать те инçетри пĕчĕк утравăн çурçĕрпе хĕвелтухăç хушшинчи çыранне çитсе чарăнать.

— Çак тĕлтен санăн роту атака пуçлать. Акă утравăн авиафотоснимокĕ, паллаш та—пуçра план ўкерсе хур,—тет капитан.

— Есть!—тетĕп эпĕ.

Тĕтре çăралса çитрĕ. Виçĕ утăмра тăракан çын та курăнмасть. Эпир, йĕлтĕрсем çине тăрса, шăппăн тинĕс хĕррине тухатпăр. Тата икĕ сехетрен, шуçăм кăвакара пуçличчен, пирĕн утрав хĕррине çитмелле.

Тинĕс пăрпа витĕннĕ. Пăр çинче тарăн юр. Кунта пирĕн паттăр саперсем анлă щитсенчен кĕпер хываççĕ. Вăл кĕпер тăрăх утрав патне танксем каймалла.

Эпир саперсенчен çурçĕр еннерех ўксе, сăнчăр пек тăсăлса çемçе юр тăрăх курăнман утрав еннелле чупатпăр. Кĕпер тумалли щитсене тиенĕ пăлансем пирĕнтен ирте-ирте каяççĕ. Шăп. Никам та калаçмасть.

Манпа юнашар—паттăрăн вилнĕ политрук вырăнне янă çамрăк политрук. Вăл фронта паян кăна Мускаври ИФЛИ[1]-рен килнĕ студент. Уншăн çапăçăва хутшăнас ĕç çĕнĕ. Çавăнпа хумханать пулас, калаçмасăр чăтаймасть.

— Историллĕ кунсем,—тет вăл шăппăн,— этемлĕх ĕмĕрте курман паттăрла ĕç пулса иртет Карели перешейкинче. Империализмла государствăсенчи çар специалисчĕсем пирĕн çĕнтерўллĕ Хĕрлĕ Çар çине тĕлĕнсе пăхаççĕ. Нихăçан та курман вĕсем кунашкал штурма. Паян

1 ИФЛИ—Институт философии и литературы.

Выборг хулин кӑнтӑр енчи ҫурчӗсем ҫине хӗрлӗ ялав ҫӗклерӗмӗр. Кӗҫех пӗтӗм хула пирӗн пулать...

Малти дозор начальникӗ эпир утрав патне ҫывхарнине, тапӑнма хатӗрленмеллине, тӑшман сисменнине пӗлтерет. Эпӗ, взвод командирӗсене пухса, красноармеецсене сапаласа яма хушатӑп. Тенепле снаряд килсе ӳксен, пӗрле пыракан ҫынсене пӗр самантра шыва путарма пултарать.

Хуллен кӑна шӑвӑнса, хура мӗлке пек кӑшт ҫеҫ курӑнакан утрав патне тухатпӑр. Ҫак утрав хӗрлӗ ялавлӑ Балти флотне Выборг заливне кӗме пӳлсе тӑрать. Унта тӑшманӑн инҫете перекен пысӑк калибрлӑ орудийӗсен батареисем пур. Ҫавсене тытса илмелле те пирӗн.

Никам та калаҫмасть. Хӗрӳллӗ ҫапӑҫу умӗн кашниннех пӗр самантлӑха пӗччен юлас килет. Унтан, харсӑррӑн ур-ра! кӑшкӑрса, тӑшманӑн штыксемпе шӑртланнӑ ретне вутлӑ тӑвӑл пек аркатса кӗрсе каймалла.

Пирӗнтен сылтӑм енне демократиллӗ Финлянди халӑх ҫарӗн батальонӗ пырса вырнаҫать, сулахай енче—пулемет роти. Кӗҫех саперсем кепер хывса ҫыран хӗрне ҫитрӗҫ. Вӗсем белофинсен патрулӗпе тӗлпулчӗҫ пулас, пӑшал сассисем илтӗнме пуҫларӗҫ. Хыҫалта вӑйлӑ моторсем шавлани ҫывхарма тытӑнчӗ. Кӗҫех типӗ ҫӗр ҫинче ҫӳрекен дредноутсем сӗвек ҫырана тухса, йӗплӗ пралук карта тӑрӑх чупса, юписене хуҫма тытӑнчӗҫ. Умлӑ хыҫлах тӳпере виҫӗ хутчен ракета ҫиҫсе ҫурӑлчӗ.

Утрав сасартӑк вӑранчӗ. Сайра ҫуртсем хушшипе хунар ҫутисем мӑчлатма тытӑнчӗҫ. Анчах каярах вӑранчӗҫ шюцкор бандисем. Пехота валли ҫул уҫнӑ танксем вӗсене пулемет вучӗпе ӑшалама тытӑнчӗҫ. Танксем хыҫҫӑн пӑр ҫинче выртакан пилӗк рота ура ҫине тӑрса атакӑна кайрӗ.

— Хатӗрлӗр гранатӑсем!

— Сталиншӑн!

— Совет халӑхӗшӗн!

— Ур-р-ра-а! Ур-р-ра-а!

— Тапта эрешмен карти пек йӗплӗ пралука! Тапта ҫӗре ӳкернӗ туратлӑ чӑрӑшсене! Аркат васкаса тунӑ йывӑҫ хӳмене!

Хӗвелтухӑҫӗнчен тӗтре шуралса килет. Ирхи шуҫӑм тинӗсе сӗт тӗсӗпе хупӑрлать.

Малта пулеметсем ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Вӗсем ҫӳллӗ чердаксем ҫинчен пирӗн ҫине тӑхлан сурчӑкне сирпӗтеҫҫӗ.

— Пӑрах чердак чӳречине граната!

— Кӗр-рӗст!—вут хыпса тухать чердак ҫинче. Пулемет шӑпланать.

— Пӑрах утӑ купи ҫине иккӗмӗш граната!

— Кӗр-рӗст!—ҫулӑмпа хӗмленет утӑ купи. Иккӗмӗш пулемет шӑпланать.

Ҫул уҫӑ.

— Малалла!

— Сывӑ пултӑр Сталин!

— Сывӑ пултӑр Куусинен!

— Ур-ра-а!..

---

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Капитан Кочетков | 3 |
| Лейтенант ывăлĕ | 17 |
| Хисеплĕ вахтăра | 32 |
| Санинструктор | 38 |
| Тăван çĕршывшăн | 45 |



Редактор **Ф. Е. Уяр.**

Подписано к печати 9/VII-41 г. Печатных листов 1,6.
Авт. листов 1,80. Тираж 3000 экз. Зак. № 341. НТ 4120.

Отпечатано в тип. № 1 Управл. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР, г. Чебоксары.

7 отд.

Цена 1 р. 30 коп.

М. КИБЕК

# ЗА РОДИНУ

Рассказы

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941